# Шухăш

Эс тăлăх-çке, тесе, ман чĕрене ан çур.
Çуралнă çĕршывра (асил, тăванăм):
Кашнин чи хаклă савнă кĕтес пур,
Чи çывăх çын та пур кирек те камăн...
Пит ырă-çке пустав çерем çинче,
Çапăçуран тухсан, чуна çумашкăн,
Сыв юлнă шухăшна инçе-инçе,
Тухăçа хирĕç вĕçтерсе ямашкăн!

Куçа хупса куратăп эп тăван яла;
Çуртсем канаççĕ лăпкă пĕлĕт айăн,
Эп савнă хĕр иртет урампала,
Лаштра йăмра чўхенкелет çил майăн.
Ак, симĕс ту çине хĕрлĕ хĕвел тухать;
Ире саламласа янрать халь юрă,
Йăл сывлăм шăрçалать халь улăха,
Вăрмансенче çĕмĕрт çеçки шап-шурă.

Çатан укăлчаран хура пусса
Кĕтў тухать, тусанланать çăкалăх.
Шăнкăр çырма хĕррипеле утса,
Ĕçе каять ĕçчен те харсăр халăх.
Хирте хăйпе хăй мухтанса, юри
Хумханкалать пек ешĕл пуçлă тырă;
Тăр пĕлĕтре янрать тăри юрри, –
Епле иркўлĕм ытарма çук ырă!..

Куçăм ўкет уй варринчи сăрта;
Çав сăрт çинче асаттесен масарĕ.
Мана çуратнă çын унта выртать;
Тăпри çинче чечек çеçки сап-сарă.
Анне... Аса илсен, шух кăмăлăм
Йăвашланать. Вăл чирлĕ чух, мăнтарăн
Пит шăппăн хушрĕ: «Савнă ывăлăм,
Вилсен, тăван масар çине пытарăн».

Чухлатăп эп: тăван çĕршыв тени –
Эпир çуралса ўснĕ ял çеç мар вăл.
Анчах куçа хупса халь асăнни
Кашнийĕн чĕринчех çунать кăварлăн.
Унта кашни кĕтес мана тăван,
Унта-çке ĕмĕрĕм пуçланнă манăн;
Унта-çке малтанхи юратăвăм,

Юна чёртсе, чуна киленӗҫ панӑ.

Салам, эппин, сӑваплӑ кӗтесе!
Енчен ун яхӑнне те урнӑ йыттӑн
Ури ярса ан пустӑрччӗ тесе,
Хӗҫпӑшала эп чӑмӑртатӑп хыттӑн,
Пӑхатӑп сивӗ вилӗме кусран,
Хаярланса, вут-ҫулӑмра ҫунатӑп...
Вара каллех, ҫапӑҫуран тухсан,
Халь асӑннӑ ҫӗрех вӗҫет ҫунатӑм.

*Алга, А. Шухӑш : [сӑвӑ] // Алга, А. Сӑввӑмсем, сӑввӑмсем / А. Алга. – Шупашкар, 1976. – С. 51-52.*